Вăрмантан тухнă сар пике

1978 çулта ăна артист пулас ĕмĕт Чăваш патшалăх академи драма театрне илсе çитерет. Кунта Мускаври М.Щепкин ячĕллĕ театр училищине вĕренме яма конкурс ирттернĕ. Ачаран тĕвĕленнĕ шухăш пурнăçланнă – 1983 çулта вăл тăван театра таврăнать. 28-мĕш çул ĕнтĕ артистка куракан умне тухать, çак хушăра вăл 60 яхăн сăнар калăпланă. Сăмахăм Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ /ку ята ăна 1993 çулта панă/ Надежда Воюцкая пирки пырать. Ачаран артист пулма ĕмĕтленнĕ хĕр ача. Кун пирки акă мĕн аса илет вăл: "Манăн сцена чўрече аниччĕ, карри – чаршав".

Вăрнар хĕрĕ раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнче пĕлĕшĕсемпе тăванĕсене, тус-тантăшне Чăваш академи драма театрне пултарулăх каçне пуçтарчĕ. Çур ĕмĕр пурăнакана саламлас, ăшă сăмах калас текен нумай пулчĕ.

– Манăн шухăшпа эсир сцена пирки ача чухнех ĕмĕтленнĕ. Паян: "Театр – манăн пурнăç, юрату", – тесе çирĕппĕнех калама пултаратăр. Пултарулăха, хăв мĕн тума пĕлнине театра, халăха парнелени вăл – пурнăç телейĕ. Кăмăллакан профессие алла илсе ĕçлени, тулли залсене курни – чăн телей. Паян сире ăнăçу, хавхалану сунас килет. Телейĕр ан татăлтăр, малаллах тăсăлтăр. Театра, сценăна парăнни сире те, пире те савăнăç кўрет, – терĕ культура министрĕ Роза Лизакова.

– Надежда – Шанчăк. Турă панă шанчăк, ачари ĕмĕт тўрре тухрĕ. Ашшĕ-амăшĕ те çын пулма çуратса ўстернĕ. Вĕсен шанчăкне те тўрре кăларчĕ Надежда. Куракан умĕнчи шанчăкне те кашни кун çирĕплетет, – саламларĕ театрăн пултарулăх ертўçи Валерий Яковлев.

Чечек çыххипе сцена çине ĕçтешĕсем те, ентешĕсем те, пĕрле вĕреннĕ тусĕсем те, тăванĕсем те, вĕрентекенĕсем те, театра юратакансем те васкарĕç. Паллах, юратнă амăшне хĕрĕ те ăшă сăмахпа савăнтарчĕ. Уяв каçĕнче Надежда Сильвестровнăна

республикăри театрсен артисчĕсем те саламларĕç.

– Пирĕн ял вăрман варринче вырнаçнă. Апла пулин те артистсем те тухаççĕ-ха унтан. Вăрманта упасем çеç мар, сар пикесем те пур иккен, – терĕ Шĕнерпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Виктор Романов.

Мĕнле пултарулăх каçĕ артист вылянă спектакльти сыпăксăр ирттĕр-ха? Хальхинче те Надежда Воюцкаяна тĕрлĕ сăнарта хаклама май пулчĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки калăпланă хăш-пĕр роле асăнсан та вырăнлă пулать ахăр. Ăна куракан Сарпи /"Вăрланă хĕр", Е.Никитина/, Рита, Лена /"Хўхĕм хĕрĕн хўхлевĕ", "Гражданла брак", Н.Сидоров/, Марине /"Çатан карта çинчи хура хăмла çырли", Б.Чиндыков/, Лиля /"Укçа чул кастарать", А.Пăртта/, Лисук /"Çĕмĕрт каллех çеçкере", Е.Тикинева/, Груша /"Хăв пурнас тенĕ пек ан пурăн", А.Островский/ сăнарĕсенче паллать.

Татьяна НАУМОВА.